**Çыру çырмашкăн аллăм çуккă...**

Çыру çырмашкăн аллăм çуккă,
Шур хут парсан та шураппа.
Ĕнер кăна выртаттăм суккăр,
Паян куратăп хам куçпа.

Ĕнер кăна сĕм-тĕттĕм каçчĕ,
Чалма хуплатчĕ куçăма.
Хĕвел курма çуралнă каччă
Çынпа тухаттăм уçăлма.

Курмастчĕ ман çут çăлтăр куçăм
Çурхи хĕвелĕн çутине.
Курас килетчĕ йăмăх шуçăм
Хĕре киле ăсатнине.

Курас килетчĕ çамрăк-кĕрĕм
Ухлĕм ути çулнине.
Хĕвел ансассăн кÿршĕ хĕрĕ
Çăл шывĕпе çăвăннине.

Курас килетчĕ хамăн Чăнлă
Юртан-пăртан тасалнине.
Вăййа тухсан, çеçке пек сăнлă
Хĕрсем хĕрсе ташланине.

Курас килетчĕ каçма урлă
Кас хĕрĕсем каçнисене.
Кĕр кунĕсем килсен шыв-шурлă

Хĕрсем улах ларнисене.

Курас килетчĕ хура пусă
Çĕнĕ юрпа шуралнине.
Анчах, аппам, курмастчĕ куçăм
Шуралнине, хуралнине.

Паян куратăп акă уççăн,
Куратăп çутă тĕнчене.
Ума тухать ем-ешĕл усăм,
Саватăп курнă сăнсене.

Куçа ăна курмашкăн панă
Тăван çĕршывăн илемне.
Çут çăлтăр пекчĕ куçăм манăн,
Пăхаттăм эпĕ инçене.

Вут-çулăмра пĕр куçăм çунчĕ,
Çавах куратăп эп, аппа,
Ĕнер кăна сĕм-тĕттĕм кунччĕ,
Паян хĕвел вылять манпа.

Çыратчĕ маншăн тусăм-йышăм
Куçăм çукран, аллăм çукран.
Халĕ салам хамран эс йышăн,
Хамах çыратăп, хăв куран.

Çыратăп эп куççулĕ витĕр,
Кăранташа шăлпа çыртса.
Кĕçех шăллу килне те çитĕ, -

Халь çитес теп çыру çырса.

Ан тив, ан пултăр мăшăр алă,
Çавах ĕç тупăп эп, аппа.
Тен, ĕçĕмпе те пулăп паллă,
Çаплах эп çӳрĕп ыр ятпа.

*Урташ, В. Çыру çырмашкăн аллăм çуккă : [сăвă] / В. Урташ // Чăваш сăмахлăхĕ : 10-мĕш класăн вĕренӳпе вулав кĕнеки / Н. Г. Иванова, В. П. Никитин, С. С. Самсонова пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар, 1996. – II пай. – С. 305-307.*